Министерство просвещения Российской Федерации
Институт изучения детства, семьи и воспитания
Разговоры о важном
2026 Год единства народов России

Заняти сценарийĕ | 1-мĕшпе 2-мĕш классем

# ПИРЕ ПĔРЛЕШТЕРЕКЕН ХАКЛĂХСЕМ

истоие асра тытни тата ăрусен çыхăнăвĕ

Раççей халăхĕсен пĕрлĕхĕ

патриотлăх

коллективлăх

пурнăç

тĕрĕслĕх

çирĕп кил-йыш

çын прависем тата ирĕкĕсем

пултарулла ĕç

гражданлăх

гуманлăх

тивĕçлĕх

пĕрне-пĕри пулăшни тата хисеплени

кăмăл-сипетĕн чаплă идеалĕсем

ăс-хакăл пуянлăхĕ пурлăхран хаклăрах пулни

ыр кăмăллăх

Тăван çĕр-шывшăн ĕçлени тата ун шăпишĕн яваплăх туйни

# 1-мӗшпе 2-мӗш классенче вӗренекенсемпе иртterekен «ЧИ КИРЛИ ҪИНЧЕН КАЛАҪАТПӐР» занятин сценарийӗ

## 32-мӗш заняти
## Пире пӗрлештерекен пахалӑхсем

**Заняти кунӗ:** 2026 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 18-мӗшӗ.

**Занятин тӗллевӗсем:** ачасем пурнӑҫа тытса пыма кирлӗ пахалӑхсем ҫинчен мӗн пӗлнине пурнӑҫпа ҫыхӑнтарасси тата аталантарасси, йӑлана кӗнӗ пахалӑхсене Раҫҫей обществин пӗрлӗхӗпе арканманлӑхӗ пек ӑнланса тӗрӗс хаклама пулӑшасси.

**Вӑй илсе аталанакан пахалӑхсем:** Раҫҫейӗн традицие кӗнӗ чун-чӗм, кӑмӑл-сипет пахалӑхӗсем.

**Тӗп шухӑшсем**

- Пахалӑхсем вӗсем – пире ку е вӑл лару-тӑрура тӗрӗс пусӑм тума пулӑшакан тӗл паллисем.
- Йӑлана кӗнӗ пахалӑхсем пире пӗрлӗхлӗ халӑхӑн пайӗ пек туйма пулӑшаҫҫӗ, обществӑна ҫирӗплетме, Ҫӗр-шыва аталантарма май параҫҫӗ.
- Пахалӑхсене ӑнланни тата упрани вӑл – обществӑн шалти килӗшӗвне тата пулас аталанӑвне шанса тӑма май паракан вӑй.
- Пахалӑхсене шута илни ҫынна аталанма тата ӑнӑҫу тума пулӑшать.
- Кашни ҫыннӑн хӑй евӗрлӗхӗ тата тӗрлӗ йӑх-ӑру пухнӑ опыт халӑха пуянлатаҫҫӗ, анчах вӑйлӑ та уйрӑлми халӑх пултӑр тесен пӗрлӗхлӗ пулмалла, пӗр-пӗрне пулӑшмалла тата хисеплемелле.

**Заняти тӑршшӗ:** 30 минут.

**Занятие ирттерме сӗннӗ форма:** ҫӗнӗ пӗлӳ паракан калаҫу. Занятире видео курма, ушкӑнпа ӗҫлемелли задание тума палӑртнӑ.

**Материал комплекчӗ:**

- сценари;
- меслет сӗнӗвӗсем;
- хушма материалсем;
- видео материалӗсем;
- ушкӑнпа тума хушнӑ ӗҫ;
- презентаци.

**Мотивacипе тӗллевлӗх тапхӑрӗ:** видео роликӗсем курни, калаҫу, ушкӑнпа ӗҫлемелли задание туни, хут листи ҫинче ӗҫлени.

**Тӗп тапхӑр:** видео курни, калаҫу, ӗҫ листи ҫинчи задание пурнӑҫлани.

**Пӗтӗмлетӳ тапхӑрӗ:** калаҫу, ушкӑнпа ӗҫлемелли задание туни.

## Мотиваципе тĕллевлĕх тапхăрĕ

**Учитель:** Вĕренӳ çулĕ тата пирĕн кашни эрнере пĕрре иртекен «Чи кирли çинчен калаçатпăр» занятисем вĕçленсе пыраççĕ. Атьăр аса илер: анонссене ертсе пыракансенчен кăçал пирĕнпе пĕрле кам тăтăш пулчĕ?

*Учитель* ***Раççейĕн çамрăк артисчĕсем хутшăннипе ӳкернĕ анонс роликсенчен чи асра юлнă самантлисене*** *кăтартать.*

**Учитель:** Халь кашниех куç хупать те, пурте пĕрле кăштах ĕмĕтленер! Хăвăр тĕрлĕ çĕнĕ япаласемпе тулли пысăк та питĕ илемлĕ пӳлĕмре тесе шутлăр. *(Занятин презентацийĕ, 2-мĕш слайд.)* Пӳлĕмре конструктор та, çемçе теттесем те, сĕтел çи вăййисем те пур. Мĕнле шухăшлатăр: кунта эсир мĕн чухлĕ тытăнса тăрăттăр?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Кунта эсир кунĕпе вылятăр тейĕпĕр. Мĕн тесен те, маларах е каярах сирĕн чупас, выляс, мультиксем курас, урама тухса пăхас килсе кайĕ.

Тепĕр пулăм: эсир хăвăр кăна иккен. Сире мĕн çитмест? *(Учитель ачасене ирĕклĕх, хутшăну çитмест, вăхăтирттерме вариантсем çук текен т. ыт. шухăш патне илсе пырать.)*

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Çапла вара, енчен те кĕрет алла лекекен, куçа курăнакан питĕ илемлĕ те питĕ хаклă япаласем туллин тăрсан та çын чăннипех телейлĕ пулаймасть иккен. Пирĕн кашнинех кампа та пулин калаçас, туслашас, юратас, ăс-тăн, пĕлӳ енчен аталанас килет. Мĕн асăннине пурне те ăс-хакăл пуянлăхĕ тетпĕр. Вĕсене (туслăха, юратăва, ăс-тăна, пĕлĕве) ытти алла лекекен е куçа курăнакан япаласем пек тĕкĕнсе пăхма е туянма çук. Ку ăнлавсене хаклăх тесе мĕншĕн калаççĕ-ши? Эсир кăмăл-сипет, чун-чĕм пахалăхĕсенчен хăшĕсене пĕлетĕр? *(Занятин презентацийĕ, 3-мĕш слайд.)*

*Ачасен хуравĕсем.*

*Учитель ачасене* ***«Йăлана кĕнĕ пахалăхсем» ятлă практика ĕçне*** *(лупăпа усă курмалли шырав) тутарать.*

**Учитель:** Çыннăн чи хаклă пуянлăхĕ вăл – унăн пурнăçĕ, ирĕклĕхĕ, çемйи тата юлташĕсем, аталанма, пултарулăх енĕпе ĕçлеме, çул çӳревсенче пулма май пурри. Кирек епле кĕрет япаласем вĕсем çĕмĕрĕлме, модăран тухма е йăлăхтарса çитерме пултараççĕ.

*Учитель* ***«Барбоскины» сериалăн фрагменчĕсене («Вечные ценности» сери)*** *кăтартать.*

*Сӳтсе явмалли ыйтусем:*

− Эсир епле шухăшлатăр: Дружок çĕнĕ телефонлă пулас тени мĕнрен килет: телефон питĕ кирлĕ пулнăран-и, е Дружокран ыттисем пурте кулнинчен-и?

− Эсир Дружокăн ашшĕ япаласемпе мухтанни лайăх мар тенипе килĕшетĕр-и? Пĕлӳ, ăс-хакăл хаклăхĕсем эпир туянма пултаракан япаласенчен мĕншĕн хаклăрах?

− Сериалăн халь курнă фрагменчĕ пирĕн калаçу темипе мĕнле çыхăннă?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Сери вĕçĕнче Дружок хăй тахçан кĕтнĕ лайфона çав-çавах илет. Лайфон моделĕ кивĕ иккен. Дружок хăйĕн тусĕсене тĕлĕнтереймест те – кулянать. Дружокпа пулнă истори мĕне вĕрентет? Дружок хăйĕн ашшĕ каланине шута илме мĕншĕн тивĕç?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Пĕлӳ, мĕн те пулин тума пултарни, чун-чĕм пуянлахĕ – çыннăн чун хавалне тулнă пуянлăх. Вăл ялан çынпа пĕрле. Ку пуянлăхран çын пурнăç тăршшĕпе уйрăлмасть.

*Учитель* ***1-мĕш заданире каланине ĕç листи çинче*** *тутарать.*

## Тĕп тапхăр

**Учитель:** Мĕн тесен те, хăш чухне вăхăта пĕччен ирттернине ним те çитмесен те – хăçан та пулсан эпир хамăр тăвансемпе юлташсемшĕн тунсăхлама тытăнатпăр. Вĕсемпе канса утса çӳреме, тĕнчене пĕлме, çул çӳревре тĕнче курма, аталанма пулать. *(Занятин презентацийĕ, 4-мĕш слайд.)* Халь хăвăр теттесемлĕ пӳлĕмрен тухса юлташăрсем патне чупрăр тесе шутлăр. Вĕсемпе уçăлса çӳреме, тĕнче çинчен çĕннине пĕлме, çул çӳревре çĕннине курма тата аталанма пулать. Юлташăрсемпе сывлăш шарĕ çине ларса çул çӳреве тухрăр тесе шутлăр! Лайăх та шанчăклă юлташ пултăр, унпа пĕрле тĕнче хĕррине те çитме май пултăр тесен мĕн кирлĕ?

*Ачасен хуравĕсем.*

*Учитель* ***ĕç листисем çинче 2-мĕш задание*** *тутарать.*

**Учитель:** Хутшăнма, калаçса татăлма тата пур ĕçе те ушкăнпа тума пĕлмелле. Куна эпир çемьере вĕренетпĕр. Çавăнпа та пирĕн халăхăн пахалăхĕсенчен пĕри вăл – çирĕп кил-йыш. Ку пахалăхпа юнашар яланах ыр кăмăллăх, пĕр-пĕрне хисеплени, тӳрĕлĕх, гуманлăх (çынлăх, çынсене юратни, вĕсемшĕн тăрăшни) вырнаçаççĕ.

*Сӳтсе явмалли ыйтусем:*

− Сирĕн шухăшăрпа, ҫемьере пурте туслă пулччăр тесе аслисемсĕр пуҫне (аттесемпе аннесемсĕр, асаттесемпе асаннесемсĕр пуҫне) тата камсен тăрăшмалла? Ашшĕ-амăшне кӳрентерес мар тесе ачасем мĕн тума пултараҫҫĕ?

– Ҫемьере пĕр-пĕрне итлеме пĕлни, дипломат пек кăмăллă калаҫма, вашаватлă пулма (хисеплеме) пĕлни мĕншĕн пĕлтерĕшлĕ?

– Хăвăр ҫемйĕрте тăванăрсемшĕн тăрăшнине, вĕсене юратнине эсир мĕн туса кăтартма пултаратăр?

− Пиртен кашнине аслă ăрусен пурнăҫ опычĕпе ăслăхĕ мĕншĕн кирлĕ?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Атьăр аса илер: йăла пахалăхĕсем ҫинчен ку вĕренӳ ҫулĕнче федераци спикерĕсем мĕн каларĕҫ?

*Учитель* ***федераци спикерĕсем панă интервью роликĕсене*** *кăтартать.*

**Учитель:** Аса илĕр: команда ҫинчен калаҫнă занятире пирĕн кашнин пĕрремĕш команди вăл ҫемье пулать терĕмĕр. *(Занятин презентацийĕ, 5-мĕш слайд.)* Пĕтĕм пурнăҫĕн тăршшĕпе ҫын ушкăнра пурăнать тата ĕҫлет. Ку вăл – пĕрле ĕҫлекен коллегăсем тата урамсенче, магазинсенче тата ытти ҫĕрте тĕл пулакан ҫынсем. Ытти ҫынсемпе калаҫса хутшăнма пултарни, ушкăнри ытти ҫынсене ăнланни, уҫăмлă та сăпайла калаҫма пултарни питĕ кирлĕ.

*Сӳтсе явмалли ыйтусем:*

− Пирĕн ҫĕр-шывăн ҫыннисем пысăк команда пулса тăраҫҫĕ тесе эпир мĕншĕн калама пултаратпăр?

– Ҫакă уйрăмах мĕнле-мĕнле самантра туйăнать? *(Ҫынсем йăла уявĕсене уявланă чухне е пачах хирĕҫле лару-тăрура – ҫĕр-шыв пĕр-пĕр йывăрлăха кĕрсе ӳксен.)*

− Эсир епле шухăшлатăр: ҫынсем пĕр-пĕринпе туслă пулсан вĕсене пурне те пырса тивекен ĕҫе тума ҫăмăлрах-и? Ҫынсем вăй ăҫта тупаҫҫĕ? *(Ҫынсем пĕр-пĕрне хавхалантарма, пулăшма, кăмăл ҫĕклеме т. ыт. тума пултараҫҫĕ.)*

− Пĕрле тăвакан ĕҫ ҫынсене епле пĕрлештерет?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Мĕн те пулин ҫĕннине тума, обществăпа патшалăха кирлĕ япала ăсталама кирлĕ ĕҫ те йăла пахалăхĕсенчен пĕри пулса тăрать. Атьăр аса илер: пĕрле тунă ĕҫĕн усси ҫинчен эпир хăш юмахра е калавра вулама пултартăмăр? Геройсем пĕччен ĕҫлесе пысăк ĕҫ мĕншĕн тăвайман? *(«Репка», «Теремок», «Три поросенка»* т. ыт. те.*)*

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** *(занятин презентацийĕ, 6-мĕш слайд.)* Йĕри-таврана сарăлнă чăнлăха лайăхлатассишĕн ĕҫлет пулсан ҫын Тăван ҫĕр-шыва аталантарма хăйĕн тӳпине

хывать. Ку вăл – Тăван çĕр-шыва юратнин (патриотлăхăн) палли. Патриотлăх (Тăван çĕр-шыва юратни) тенине эсир епле ăнланатăр? Патриот тесе эпир кама калатпăр?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Пиртен кашниех Тăван çĕр-шыва юратнине тĕрлĕрен палăртма май пуррине пĕлет: ку вăл тăван çĕр-шывăн çут çанталăкĕпе культурине упрани те, историне вĕренни те, маларах пурăнса çĕр-шывăмăра пирĕн валли хӳтĕленĕ, упранă тата аталантарнă çынсене асра тытни те. *(Занятин презентацийĕ, 7-мĕш слайд.)* Пирĕн нумай нациллĕ çĕрĕмĕр-шывăрăн халăхĕсем пурте йăла пахалăхĕсемпе тата Тăван çĕрĕмĕр-шывăмăрăн шăпишĕн яваплăх туйнипе пĕрлешнĕ.

*Сӳтсе явмалли ыйтусем:*

– Çĕр-шывăмăрăн культурине епле тĕпчемелле-вĕренмелле? *(Кĕнекесем вулани, музейсене, выставкăсене, концертсене çӳрени, документлă тата илемлĕ фильмсене курни.)*

– Унчченхи ăрусенчен илсе юлнă япаласене эпир мĕншĕн пурлăх (пуянлăх) тетпĕр?

– Халь пуррине эпир кам валли упраса хăварма тивĕçлĕ?

– Чăн-чăн гражданин, сирĕн шухăшăрпа, епле çын пулма тивĕçлĕ? Вăл чăнах та герой (паттăр), пысăк ученăй пулмалла-и? Кашни çын хăйĕн Тăван çĕрне-шывне аталантарма май тупма пултарать-и?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель** *(занятин презентацийĕ, 8-мĕш слайд):* Ку вĕренӳ çулĕнче «Чи кирли çинчен калаçатпăр» курсăн занятийĕсенче эпир, кашни эрнере, пирĕн обществăпа патшалăх епле аталанни çинчен, ку ĕçре аслă ученăйсемпе тăпчевçĕсем (çав вăхăтрах ахаль çынсем те) епле вырăн йышăнни çинчен, вĕсем хăйсен ĕçне чуна парса, яваплăх туйса пурнăçлани çинчен, ытти çынсене епле хисеплени çинчен, чĕр чунсене, ӳсен-тăрана тата тавралăха упрасишĕн епле тăрăшни çинчен калаçрăмăр. Занятире илтнĕ историсенчен асра ытларах хăшĕсем юлчĕç? Камăн пурнăç çулĕ е паттăрла ĕçĕ сирĕншĕн тĕслĕх пулса тăчĕ? Мĕншĕн килĕшнин сăлтавне ăнлантарса парăр.

*Ачасен хуравĕсем.*

## Пĕтĕмлетӳ тапхăрĕ

**Учитель:** Çыннăн хăй тытса тăма пултаракан чи пысăк мулĕ вăл – ытти çынсемпе вăрăçмасăр, ăнланса тата килĕштерсе пурăнни. *(Занятин презентацийĕ, 9-мĕш слайд.)* Халăхăмăрăн йăлана кĕнĕ пахалăхĕсем пире тĕрĕс йышăну тума, начаррине лайăххинчен уйăрма пулăшаççĕ, пирĕншĕн кăмăл-сипет ориентирĕ пулса тăраççĕ.

Историн мĕн пур тапхăрĕнче çынсемшĕн чи кирли ăс-хакăл пуялăхĕ пулнă. Вăл пурлăх, укçа-тенкĕ пуянлăхĕнчен чылай çӳлте тăнă, ăруран ăрăва типтерлĕ

куҫса пынă. Лару-тăру кирек мĕнле улшăнсан та ҫĕр ҫинче кăмăл-сипетĕн чаплă идеалĕсем, чыслăх, ырăлăх, юрату ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕҫ.

*Учитель* ***ĕç листисем ҫинче 3-мĕш задание*** *тутарать.*

*Сӳтсе явмалли ыйтусем:*

– Занятин вĕҫĕнче эсир тĕп пĕтĕмлетӳ пулать тесе мĕнле шухăш калама пултаратăр?

– Ăс-хакăл хаклăхĕсем ҫынсене мĕнле пĕрлештерессĕ?

– Камшни ҫыннăн хăйĕнче лайăх тата ырă пахалăхсене мĕншĕн аталантармалла?

– Ăс-хакăл хаклăхĕсем пурлăх, укҫа-тенкĕ пуянлăхĕнчен мĕншĕн ҫӳллĕрех тăрассĕ?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Юлашки калаҫу**

**Хисеплĕ ĕҫтешсем!**

**Сире 2026 ҫулхин ҫу уйăхĕн 22-мĕшĕччен анкетăлав иртме тата «Чи кирли ҫинчен калаҫатпăр» курсăн паянхи кунпа тачăрах ҫыхăннă занятийĕсене палăртма пулăшма чĕнетпĕр.**

**Мĕн вуламалла?**

- Зартайская И. «Мой папа самый лучший!»
- Шварц Е. «Первоклассница»
- Носов Н. «Огурцы»
- Чуб Н. «Школа доброты и дружбы»
- Погорельский А. «Черная курица»

**Мĕн курмалла?**

- Киноурок «Три солнца»
- Мультипликационный фильм «Дудочка и кувшинчик», 1950
- Мультипликационный фильм «Приключения кота Леопольда»
- Мультипликационный фильм «Крошка Енот», 1974
- Мультипликационный фильм «Про Миру и Гошу. Другой мальчик»